Ăслăлăх статйи

# 10–11-мĕш классен чăваш чĕлхи вĕренӳ кĕнекин ăслăлăх никĕсĕ

**DOI** 10.31483/r-100580
**УДК** 811.512.111

Check for updates

**Виноградов Ю.М.**
ЧР ХПВ Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ,
Шупашкар хули, Раççей Федерацийĕ.
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902; e-mail: chrio6@cap.ru

***Аннотаци:*** *Статьян тĕллевĕ* – чăваш шкулĕн 10–11 класĕсем валли хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхи» вĕренӳ кĕнекин ал çырăвĕн содержанийĕпе, тытăмĕпе тата материала уçса пама усă курнă ăслăлăхпа паллаштарасси. Тĕпчев материалĕпе меслечĕ.

*Тĕпчев материалĕ* – чăваш шкулĕн 10–11 класĕсем валли хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхи» вĕренӳ кĕнекин ал çырăвĕ. Тĕпчеври танлаштару тата тишкерӳ меслечĕсемпе усă курнă.

Ал çырăвне РФ вĕренӳпе меслетлĕх пĕрлешĕвĕн 2020 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче йышăнăвĕпе (3/20 №-лĕ протокол) ырланă программăпа килĕшӳллĕ çырнă. Программа – чăваш шкулĕн 5–9 классенче вĕреннине аса илме тесе хатĕрленĕскер. Çавăнпа вĕренӳ кĕнекине, тĕпрен илсен, аса илӳ материалне кĕртнĕ. Çĕнĕ тема тесе «Чĕлхепе пуплевĕн прекет законĕ» темăна пăхмалла. Мĕн пур темăна ăслăлхăн чи юлашки çитĕнĕвĕсене тĕпе хурса ăнлантарнă. Автор, И.А. Андреев профессор пекех, шкул программине «Фразеологи» темăна кĕртни вырăнсăр тесе пăхать. Сăмаха синтаксиспа çыхăнтармасăр пăхни ку е вăл формăпа мĕн тума кирлине уçса параймасть. Тĕслĕхрен, синтаксис аффиксĕ мĕнсене çыхăнтарнине кăтартмалла: ик сăмаха-и, сăмах ушкăнне сăмахпа-и, сăмах пĕрлĕхĕсене-и? Çавăнпа шкулта морфемкăпа морфологие синтаксиса шута илсе вĕрентмелле.

***Тĕп сăмахсем:*** чĕлхе, общество, культура, фонетика, графика, орфографи, лексика, лексикографи, сăмах тытăмĕ, сăмах пулăвĕ.

***Цитатăлама:*** Виноградов Ю.М. 10–11-мĕш классен чăваш чĕлхи вĕренӳ кĕнекин ăслăлăх никĕсĕ // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2021. – Т. 4, №4. – С. 57-60. DOI 10.31483/r-100580.

Научная статья

# Научные основы учебника по чувашскому языку для 10–11 классов

**Виноградов Ю.М.**
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики,
Чебоксары, Российская Федерация.
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902; e-mail: chrio6@cap.ru

***Резюме:*** *Целью* статьи является ознакомление читателя с содержанием, структурой и научными основами изложения тем в рукописи будущего учебника по чувашскому языку для учащихся 10–11 классов школ с родным языком обучения.

*Материалом* исследования является рукопись учебника «Чувашский язык» для 10–11 классов школ с родным (чувашским) языком обучения. В работе использован сравнительно-аналитический метод исследования.

Рукопись подготовлена в соответствии с программой, одобренной решением федерального учебно-методического объединения (протокол №3/20 от 17 сентября 2020 г.). Данная программа нацелена на повторение и закрепление материала 5–9 классов. В связи с этим в рукопись включен соответствующий этой цели материал. Новой темой, главным образом, является тема «Языковая и речевая экономия». Все темы изложены в соответствии с достижениями современной языковой теории. Автор, как и профессор И.А. Андреев считает, что изучение темы «Фразеология» является неуместным. Изучение слова вне связи с синтаксисом не раскрывает сути использования тех или иных аффиксов. Например, синтаксические аффиксы могут принимать как отдельные слова, так и словосочетания. Поэтому в школе морфемику и морфологию следует излагать с учетом синтаксиса.

***Ключевые слова:*** язык, общество, культура, фонетика, графика, орфография, лексика, лексикография, состав слова, словообразование.

***Для цитирования:*** Виноградов Ю.М. Научные основы учебника по чувашскому языку для 10–11 классов // Развитие образования. – 2021. – Т. 4, №4. – С. 57-60. DOI:10.31483/r-100580.

Research Article

# Scientific Foundations of the Chuvash Language Textbook for 10-11 Grades

**Yuriy M. Vinogradov**
BI of FVE “Chuvash Republican Institute of Education” of the Ministry of Education of Chuvashia,
Cheboksary, Russian Federatio.
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902; e-mail: chrio6@cap.ru

***Abstract:*** *The purpose* of the article is to familiarize the reader with the content, structure and scientific foundations of the presentation of topics in the manuscript of the future textbook on the Chuvash language for students of grades 10-11 of schools with their native language of instruction.


CC BY

*The research material* is the manuscript of the textbook "Chuvash language" for grades 10-11 of schools with a native (Chuvash) language of instruction. The comparative-analytical method of research is used in the work.

The manuscript was prepared in accordance with the program approved by the resolution of the Federal Educational and Methodological Association (Protocol No. 3/20 of September 17, 2020). This program is aimed at repeating and fixing the material of grades 5-9. In this regard, the manuscript includes relevant material for this purpose. The new topic is mainly the topic of "Language and speech economy". All topics are presented in accordance with the achievements of modern language theory. The author, as well as professor I.A. Andreev, believes that the study of the topic "Phraseology" is inappropriate. Studying a word out of connection with syntax does not reveal the essence of the use of certain affixes. For example, syntactic affixes can take both individual words and phrases. Therefore, morphemics and morphology should be presented in school taking into account syntax.

***Keywords:*** language, society, culture, phonetics, graphics, spelling, vocabulary, lexicography, word composition, word formation.

***For citation:*** Vinogradov Y.M. (2021). Scientific Foundations of the Chuvash Language Textbook for 10-11 Grades. *Razvitie obrazovaniya = Development of education, 4*(4), 57-60. (In Chuv.) DOI 10.31483/r-100580.

**Кӳртӗм**

Пирӗн тӗллев 10–11 классен пичете хатӗрлесе ҫитерне ал ҫырӑвӗпе паллаштарасси, учительсен вӑтам шкулӑн юлашки класӗсенче ӗҫлес кӑмӑлне ҫӗклесси пулса тӑрать. 10–11 классен «Чӑваш чӗлхи» вӗренӳ кӗнекине РФ вӗренӳпе методика пӗрлешӗвӗ ырланӑ программӑна [4, с. 23–27] тивӗҫтерсе ҫыртӑмӑр. Программӑра 5–9 классенче вӗреннӗ темӑсене тепӗр хут каласа тухсаттӑмӑр, тӗпрен илсен, унчен вӗреннӗ йӗркепех вырнаҫтартӑмӑр. Ҫакна вӗренӳ кӗнекинче те тытса пытӑмӑр. Кӗнекене автор малтан 2020 ҫулта кӑларма палӑртсаччӗ, анчах вӑхӑт ҫитменни чӑрмантарчӗ. Ҫакӑ 9-мӗш классен кӗнекипе ӗҫленӗ чухнех палӑрчӗ. Кӗнеке 2019 ҫулта мар, 2020 ҫулта тин тухни ахальтен мар. Кунсӑр пуҫне ӗҫе программа та тытса тӑчӗ.

**Материал тата меслетсем**

Вӗренӳ кӗнекине харӑс икӗ класс материалне вырнаҫтартӑмӑр: синтаксис темисене («Синтаксис – сӑмах майлашӑвӗпе предложение тӗпчекен ӑслӑлӑх», «Синтаксис пунктуацие витӗм кӳни», «Сӑмах майлашӑвӗ: пӗлтерӗшӗ, тытӑмӗ», «Хутсӑр предложени», «Хутлӑ предложени», «Чӗлхепе пуплев»), тӗпрен илсен, 11-мӗш класӑн пайне кӗртнӗ, ыттисене («Чӗлхе ҫинчен пӗтӗмӗшлӗн калани. Чӑваш чӗлхи расна шайра тӑракан хатӗрсен системи пулни», «Фонетикапа орфоэпи. Графикӑпа орфографи», «Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи», «Сӑмах тытӑмӗ тата сӑмах пулӑвӗ», «Морфологи») – 10 класа. 10-мӗш классем валли ҫырни калӑпӑшӗпе кӑшт пысӑкрах пулчӗ, мӗншӗн тесен фонетикӑпа та, лексикӑпа та, морфологипе те пӗлтерӗшлӗ ыйтусем нумай. Ҫитменнине, 5–7 классенче вӗренни асра сахалрах юлать те, теори ыйтӑвӗсене тӗплӗнрех ҫырса пама тивет. Теори тенӗрен, теори тексчӗ ӑна хӑш класра вӗреннине кура майӗпен чакса пырать. Ҫӗнӗ тема пулсан ӑна тӗплӗнрех ӑнлантартӑмӑр. Кун пек тема шутне «Чӗлхепе пуплевӗн перекетлӗх законӗ» тема кӗрет. Апла пулин те ӑна май килнӗ таран кӗскен ҫыртӑмӑр. «Лексика. Фразеологи лексики. Лексикографи» темӑра ҫӗнӗлӗх пур. Ку вӑл – фразеологи. Ӑна И.А. Андреев профессор хӑй тунӑ программӑсене кӗртместчӗ, 1960–70 ҫулсенче пичетленнӗ статьясемпе кӗнекесем ҫине таянса: «Французсен литературине тӗпченӗ май ним сӑлтавсӑр ҫуралнӑ теори», – тетчӗ. Сӑлтавсӑр ҫуралнӑ теори пурри ҫинчен ал ҫырӑвӗнче эпир те ик-виҫ сӑмах ҫыртӑмӑр. Фразеологи ыйтӑвне программӑна малтан эпир те кӗртмерӗмӗр, ҫапах тавлашса вӑхӑт ирттерес килмерӗ – Мускавсем хистенипе «Лексика. Фразеологи. Лексикографи» формулировка хӑвартӑмӑр. Унӑн «фразеологи» сӑмахне вӗренӳ кӗнекинче «фразеологи лексики» сӑмахсемпе улӑштартӑмӑр, мӗншӗн тесен синтаксис лексика мар. Ҫапла вара, 10-мӗш класс ачасем чӑваш чӗлхи урокӗсенче унчен вӗренмен темӑна вӗренеҫҫӗ. И.А. Андррев профессор программисенче пулман тема вӑл – «Чӗлхепе пуплев» тема ӑшне кӗрекен «Чӗлхепе пуплевӗн перекет законӗ» микротема [1, с. 37–50]. Тӗлӗнмелле те, ку темӑна хирӗҫлекен никам та пулмарӗ.

Морфемикапа морфологие вӗрентнӗ чухне паян кун эпир синтаксис аффиксӗсем сӑмаха тепӗр самахпа ҫыхӑнтараҫҫӗ тесе вӗрентетпӗр. Тӗрӗссипе, ку аффикссем анлӑ самах майлашӑвӗн пайӗсене те ҫыхӑнтараҫҫӗ Акӑ Таксист йывӑр сумкӑсене багажника хучӗ предложенире пару падеж аффиксӗсесемпе икӗ хутчен усӑ курнӑ. Пӗри (-а) багажник сӑмаха хур глаголпа ҫыхӑнтарать, тепри (-е) – йывӑр сумкӑсем сӑмахсене багажника хур глагол сӑмах майлашӑвӗпе. Куна ӑнланас тесен синтаксис пӗлмелле. Ҫавӑнпа пирӗн мофемикӑпа морфологие синтаксис ҫине таянса вӗрентес пирки шухӑшламалла.

Шкул кӗнекине кӗртнӗ темӑсем теори енчен хальхи чӗлхе вӗрентӗвӗпе пӗтӗмӗшлӗн килӗшсе тӑраҫҫӗ теме юрать. Автор тӗпчевҫӗсем хальхи чӑваш чӗлхи ҫинчен мӗн каланине шута илет. Фонетикӑра, сӑмахран, П.Я. Яковлев доцент каланисене [8, с. 3–421; 9, с. 64–262, 206–22; 10, с. 19–75, с. 117–122], сӑмах тытӑмӗпе морфологире В.И. Сергеев профессор ҫырнине [5, с. 8–392; 6, с. 3–172], синтаксисра И.А. Андреев профессор теорине тӗпе хутӑмӑр [2, с. 9–320]. Сӑмах майлашӑвӗн, пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложеннин ҫыхӑну мелӗсене В.И. Сергеев теорине пӑхӑнса ӑнлантартӑмӑр. Ҫавӑнпа пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене 9-мӗш класри пекех ушкӑнларӑмӑр. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенин пунктуацийӗ валли [3, с. 3–174] пысӑк вырӑн уйӑрмалла пулчӗ, мӗншӗн тесен, пичет ӗҫӗнче, хальхи пунктуацин шухӑш принципне ӑнланмансем, хирӗҫлекенсем пур. Ҫитменнине, 9-мӗш класс кӗнекин теори тата хӑнӑхтару материалӗ сахал иккенне шута илтӗмӗр. Лексикӑпа морфологие ӑнлантарнӑ чух Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн студенчӗсен вӗренӳ кӗнеки (авторӗсем – Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, В.И. Котлеев) пулӑшрӗ [7, с. 28–86, 255–425].

«Текст» темӑна ачасем 5-мӗш класран пуҫласа 9 класс пӗтериччен ҫулсерен вӗренеҫҫӗ. Ҫӗнни унченхи ҫумне пӗчӗккӗн кӑна хушӑнса пынӑ пирки киввине ҫине-ҫине аса илме тивет те, ку вара 11-мӗш класс ачисен ӗҫне чылай ҫӑмӑллатать.

Теорие тепӗр хут ҫырас мар, кӗскен ӑнлантарас тесе автор ачасене ку е вӑл темӑна аса илме хистекен хӑнӑхтарусем сӗнет. Вӗсене тунӑ май ачасем е таблицӑра панӑ материала тишкереҫҫӗ, е тӗслӗхсем тупса хушса хураҫҫӗ, е хатӗр материала таблицӑна вырнаҫтараҫҫӗ. Тӗслӗхрен, «Пурлӑ тата ҫуклӑ предложенисем» темӑпа теори ҫырмасӑрах тӳрех ҫакнашкал ӗҫ патӑмӑр.

Таблицӑсем 5–9 классенче вӗреннине аса илтернӗ чухне те, хӑнӑхтарусем тунӑ чухне те, темӑна алла илнине ҫирӗплетнӗ чухне те тӗл пулаҫҫӗ.


CC BY

Таблицăна тишкерĕр. Чăваш чĕлхинче çуклăха палăртмалли мĕнле мелсем пур? Вĕсем ăçта вырнаçаççĕ?

**Таблица 1**
**Table 1**

| №№ | Çуклăх паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сказуемăй пулакан глаголăн çуклăх аффиксĕсем: -м, -ма, -ме, -мас(-мес) | Çул çинче аташса каймăр-и? Ванюк каççăр та таврăнмарĕ. Уçăп ăна-кăна шарламасть. Вĕри кăвар час сÿнмест. |
| 2. | Сказуемăй çумĕнче кăна тăма тивĕçлĕ татăксем: ан, мар, çук | Тÿрĕ хуравран ан пăрăн. Эпир халех каяс çук. Уявра мĕншĕн савăнмалла мар? |
| 3. | Çук татăкпа ытти мелсен пĕрлешĕвĕ | Çук, нимех те пулман. Çук, каланă сăмаха манас çук. |
| 4. | Çук паллă ячĕ | Ман йĕс йĕвен çук. Урамра лаша çук та. |

Кашни пысăк тема хыççăн çирĕплетÿ тата тĕрĕслев ĕçĕ тума ыйтусемпе ĕçсем сĕнтĕмĕр. Кун пек ĕçсем кашни класс валли уйрăммăн тата икĕ çул тăршшĕ вĕреннине тĕрĕслеме ятарлă янтăларăмăр.

Ал çырăвĕнче 5–9 классен кĕнекисенче юлнă йăнăшсене шута илтĕмĕр, тÿрлетрĕмĕр, каласа çитерменнине каласа çитертĕмер. Тĕслĕхрен, хутлă предложенисен пунктуацине алла илме правило хушрăмăр, тĕллевлĕ хăнăхтарусем кĕртрĕмĕр.

Ал çырăвĕнче е вĕренÿ кĕнекинче йăнăш тунă е мĕн те пулин каламасăр хăварнă пулсассăн малашнехи кăларăмсенче ку е вăл çитменлĕхе катертме, кирлине хушма май килĕ.

**Результат**

Çапла вара, 10-мĕшпе 11-мĕш классем валли тесе хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхи» кĕнекен ал çырăвĕ шкулта усă курма юрăхлă кĕнеке кăларма май парать. Ал çырăвĕнче якатмалли, уçăмлатмалли вырăнсем тата та тупăнĕç-ха. Вĕсене ал çырăвне пичете хатĕрленĕ май пăхăпăр, рецензисенче мĕн каланине шута илĕпĕр. «Фразеологи» темăна программăна кĕртмелле мар. Морфемикăпа морфологие синтаксиспа çыхăнтарса вĕрентмелли майсем тупас пулать.

Кĕнеке хатĕрлесе кăларасси – кăткăс та йывăр ĕç. Ку ĕçре малашне пире ăслăлăх çыннисемпе учительсем сĕнÿ парса пулăшĕç тесе шанатпăр.


***Список литературы***

1. Андреев И.А. Типы языковой экономии и их взаимодействие в структуре чувашского языка / И.А. Андреев // Известия Академии наук Чувашской Республики. Гуманитарные науки. – Чебоксары, 1993, вып. 1, №1. – С. 37–50.
2. Андреев И.А. Хальхи чăваш чĕлхи. Синтаксис / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. – 334 с.
3. Андреев И.А. Чăваш пунктуацийĕ: Тÿрлетсе çĕнетнĕ кăларăм / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. – 175 с.
4. Примерная образовательная программа учебного предмета «Родной (чувашский) язык» для 10–11 классов среднего общего образования (одобрена решением федерального учебно-методического объединения по общему образованию (протокол от 17 сентября 2020 г., №3/20) / разработчики Ю.М. Виноградов, В.И. Игнатьева // Сайт Чувашского республиканского института образования; баннер «Наци вĕренĕвĕ. Национальное образование», раздел «Тĕслĕх программăсем. Прикладные, проектно-ориентированные исследования, разработки». – 70 с.
5. Сергеев В.И. Морфология чувашского языка: словоизменение, формоизменение и формообразование: монография / В.И. Сергеев; науч. ред. А.П. Долгова. – Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 2017. – 400 с. – (Строй чувашского языка).
6. Сергеев В.И. Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи: вĕренÿ кĕнеки / В.И. Сергеев. – Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 1992. – 176 с.
7. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи: чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем валли хатĕрленĕ вĕренÿ кĕнеки / Л.П. Сергеев; Е.А. Андреева, В.И. Котлеев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. – 431 с.
8. Яковлев П.Я. Двуязычие и чувашская фонетика: пути решения теоретических и практических проблем / П.Я. Яковлев; науч. ред. Г.А. Николаев. – Чебоксары, 2021. – 56 с. – (Научные доклады). ЧГИГН; вып. 33.
9. Яковлев П.Я. Фонетика и фонология чувашского языка: монография / П.Я. Яковлев; науч. ред. А.П. Долгова. – Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 2020. – 288 с. – (Строй чувашского языка).
10. Яковлев П.Я. Чăваш фонетики: Вĕренÿ кĕнеки / П.Я. Яковлев; Чăваш ун-чĕ. – Шупашкар, 1995. – 136 с.

***References***

1. Andreev, I. A. (1993). Tipy iazykovoi ekonomii i ikh vzaimodeistvie v strukture chuvashskogo iazyka. Izvestiia Akademii nauk Chuvashskoi Respubliki. Gumanitarnye nauki, 11, 37-50. Cheboksary.
2. Andreev, I. A. (2005). Khal'khi chavash chelkhi. Sintaksis., 334. Shupashkar: Chavash keneke izd-vi.
3. Andreev, I. A. (2004). Chavash punktuatsiie: Tyrletse cenetne kalaram., 175. Shupashkar: Chavash keneke izd-vi.



CC BY

4. Primernaia obrazovatel'naia programma uchebnogo predmeta "Rodnoi (chuvashskii) iazyk" dlia 10-11 klassov srednego obshchego obrazovaniia (odobrena resheniem federal'nogo uchebno-metodicheskogo obedineniia po obshchemu obrazovaniiu (protokol ot 17 sentiabria 2020 g., 3. Sait Chuvashskogo respublikanskogo instituta obrazovaniia; banner "Natsi vereneve. Natsional'noe obrazovanie", razdel "Teslekh programmasem. Prikladnye, proektno-orientirovannye issledovaniia, razrabotki", 70 c.

5. Dolgova, A. P., & Sergeev, V. I. (2017). Morfologiia chuvashskogo iazyka: slovoizmenenie, formoizmenenie i formoobrazovanie: monografiia., 400. Sergeev;; Cheboksary: Chuvash. gos. in-t gumanit. nauk.

6. Sergeev, V. I. (1992). Khal'khi chavash chelkhi. Morfologi: vereny keneki., 176. Shupashkar: Chavash un-chen izd-vi.

7. Sergeev, L. P., Andreeva, E. A., & Kotleev, V. I. (2012). Chavash chelkhi: chavash filologi fakul'techen studenchesem valli khaterlene vereny keneki., 431. Sergeev; Shupashkar: Chavash keneke izd-vi.

8. Nikolaev, G. A., & Iakovlev, P. Ia. (2021). Dvuiazychie i chuvashskaia fonetika: puti resheniia teoreticheskikh i prakticheskikh problem., 56. Iakovlev;; Cheboksary; ChGIGN;.

9. Dolgova, A. P., & Iakovlev, P. Ia. (2020). Fonetika i fonologiia chuvashskogo iazyka: monografiia., 288. Iakovlev; Cheboksary: Chuvash. gos. in-t gumanit. nauk.

10. Iakovlev, P. Ia. (1995). Chavash fonetiki: Vereny keneki, 136. Iakovlev; Shupashkar.

*Автор ҫинчен пӗлтерни*

**Виноградов Юрий Михайлович** – филол. ӑслӑлӑхӗн к-чӗ, доцент, Чӑваш Республика вӗренӳ институчӗн ӑслӑлӑх ертӳҫӗ ӗҫтешӗ, Шупашкар хули, Раҫҫей Федерацийӗӗ.

*Информация об авторе*

**Виноградов Юрий Михайлович** – канд. филол. наук, доцент, ведущий научный сотрудник, БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики, Чебоксары, Российская Федерация.

*Information about the author*

**Yuriy M. Vinogradov** – candidate of philological sciences, associate professor, leading research fellow of BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education of the Ministry of Education of Chuvashia", Cheboksary, Russian Federation.

**Поступила в редакцию / Received / Редакцие ҫитнӗ** 26.11.2021
**Принята к публикации / Accepted / Пичетлеме йышӑннӑ** 20.12.2021
**Опубликована / Published / Пичетленсе тухнӑ** 22.12.2021


CC BY